**ЮБИЛЕЙ**

# ТАВАХ САНА, ТӐВАНӐМӐР

## Г.И.Федоров профессор 60 ҫул тултарнӑ май



ИРТНӖ ӗмӗрӗн 80-мӗш ҫулӗсенче чӑваш литературин пӗлӳ лаҫҫинче ҫӗнӗ варкӑш пулчӗ. Чи малтанах илемлӗ литература историне Михаил Федоровран мар, авалхи пӑлхар тапхӑрӗнченех, тӗрӗксен пӗрлӗхлӗ сӑмахлӑхӗнченех пӑхма пуҫларӑмӑр. Унтан манӑҫа кӑларнӑ ятсене тавӑрма, вӗсен пултарулӑхне тишкерме тытӑнтӑмӑр. Ӑслӑлӑхри тӳнтер социологсемпе хыттӑн калаҫса-тавлашса илтӗмӗр, тишкерӳре малти вырӑна илемлӗхе лартма кирлине ӗнентерме тӑрӑшрӑмӑр.

Ҫак тапхӑрта пире ҫӗнӗлле шухӑшлакан литературоведсем питех те кирлӗччӗ. Ун чухне А.Васан тата ыттисем тӑрӑшнипе тӗпчев институтне пӗр шкулта нумай ҫул вӑй хуракан Федоров текенскере /ара, ун чухне ҫак тӗпчевҫӗ пирки пӗлсех кайман-ҫке!/ вырнаҫтарма май килнӗччӗ. Ӑслӑлӑх канашӗн ларӑвӗнче пӗр сасӑ ытларах пухса пирӗн яланхи оппозици ҫӗнтерме пултарчӗ. Халӗ те ҫак факта ҫав ҫулсенчи пысӑк ҫитӗнӳ вырӑнне хурса хаклатӑп.

Ҫапла майпа сӑмахлӑх тӗпчевӗн анине Георгий Федоров ҫитсе кӗчӗ. Ҫӗмӗрле районӗнчи Патаккасси /Питукино/ ялӗнче 1942 ҫулхи нарӑсӑн 10-мӗшӗнче ҫуралнӑ пулас тӗпчевҫӗ. Хастар шыравҫӑ, сӑмах техӗмне шалтан, ӑшран туякан тишкерӳҫӗ. Малтан сывлӑш ҫавӑрнӑ пек вӑхӑт пулчӗ те 90-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче ҫав ҫын тӗпчев хыҫҫӑн тӗпчев ирттерме, статья хыҫҫӑн статья пичетлеме пуҫӑнчӗ. Хайхи сиссе те юлаймарӑмӑр – Георги тусӑмӑр малтан мала кайса /кайри мала тенешкел/ литературоведсен картин пуҫне тӑма пултарчӗ. 90-мӗш ҫулсенче чӑваш литератури пӗлӗвӗнче тунӑ пысӑк ҫитӗнӳсем пурте пекех ҫак тӗпчевҫӗ пултарулӑхӗпе ҫыхӑннӑскерсем. Кунта ӳстерсе калани пачах та ҫук. Сӑмахӑма ҫирӗплетме, шухӑшӑма тӗрек пама Г.Федоровӑн тӗпчев ӗҫӗсене ятран пӑхса тухӑп.

Акӑ унӑн 80-мӗш ҫулсен вӗҫӗнче ҫырнӑ, 1991 ҫулта пичетленсе тухнӑ «Художественный мир Федора Уяра» монографинех илер. Унччен чӑваш сӑмахлӑх тӗпчевӗсенче **илемлӗ тӗнче** тесе калани тӗл пулсах каймастчӗ. Г.Федоров ҫак ӑнланӑва кӗрекене лартрӗ кӑна мар, вӑл ӑна пула ҫыравҫӑсен пултарулӑх тӗшшине тупса палӑртма пултарчӗ. Уйрӑмах проза ӑстисенне. Эпӗ кунта икӗ пысӑк ҫыравҫӑна кӑна асӑнасшӑн: Хветӗр Уяр тата Юрий Скворцов. Ҫак прозаиксен пултарулӑхне Г.Федровран ытла пӗлетӗп теме камах пултарайтӑр?

90-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче пирӗн юлташӑмӑр «тӗрлӗ культурӑсен диалогӗ», «каланман сӑмах поэтики», «автор-художник», «пултарулӑх гносеологийӗ», «илемлӗ шухӑшлав», «поэтика воплощения», «рефлективное сознание» йышши ӑнлавсене кӑмӑллани сисӗнчӗ. Паллах, кунта тӗпчевҫӗ М.М.Бахтин, В.С.Библер, В.В.Виноградов тата ытти паллӑ ҫынсен витӗмӗ те курӑнмасть мар. Ҫапах та ҫав тӗпчевҫӗсенчи инструментарипе ҫырлахса лармарӗ вӑл, ҫӗннине шырарӗ. Тӗслӗхрен, «нумай пӑнчӑлӑх» текен ӑнлава илер-ха. Чӑваш ӑслӑлӑхӗнче ҫав ӑнлавӑн пӗлтерӗшӗпе функцине пуҫласа Г.Федоров тӗпчерӗ, ҫӗнӗ сӑмах калама пултарчӗ. Е тата «художник сӑнарӗ», «культура символӗ» йышши ӑнлавсене илер. Кунта та термин хыҫӗнче ҫӗнӗ меслетлӗх, ҫӗнӗ шухӑшлав тӑни курӑнать.

Ҫапла вара Г.Федоров литература тӗпчевне, пӗрремӗшӗнчен, чылай тарӑнлатрӗ; иккӗмӗшӗнчен, унӑн чиккисене сарсах пычӗ. Вӑл ытларах философи, мифологи сийӗсене асӑрхама кӑмӑллани сисӗнчӗ. Калу, пуплев тӗсӗсене сӑнани ӑна авторпа герой, стильпе жанр ҫыхӑнӑвӗсене тӗпчеме май пачӗ.

Малтанласа Г.Федоров эстетика, илемлӗх категорийӗсемпе шухӑшлатчӗ. Аталаннӑҫемӗн вӑл **ӑн, шухӑшлав, контекст** пирки калаҫма пуҫларӗ. Тӗпчевҫӗ ытти ӑслӑлӑхсенчи ӑнлавсене сӑмахлӑх теорине ӑнӑҫлӑн кӗртме пултарчӗ. Пӗр хушӑ вӑл, модӑна кура-ши, экзистенциллӗ туйӑм, ӳкӗнӗҫ философийӗ пирки те ҫырса пӑхнӑччӗ. Каярах унӑн куҫӗ тӗлне культура контекстӗнчи сӑмахлӑх ӗмӗлкисем-сӳреткисем курӑнма пуҫларӗҫ. Хветӗр Уяр пухса хатӗрленӗ «Чуваши в русской литературе и публицистике» кӗнекен ум сӑмахӗнче Г.Федоров культурфилософи ыйтӑвӗсене хускатма пултарчӗ, чылай ҫӗнӗ шухӑш каларӗ. Ытти тӗпчевҫӗсемпе пӗрле вӑл ҫырулла культура, сӑмах культури пирки шухӑшларӗ, ҫав ӑнлавсене философи сӗмӗ кӗртрӗ. «Халӑх культурипе цивилизаци ҫулӗ, хайхи, наци ӑнӗпе килӗшсе тӑрать-мӗн. Ӑнӗ вара тӗрлӗ сӑпатлӑ: чӗлхепе пуплев ӑнӗ, эстетика ӑнӗ, историлле ӑн, философилле ӑн, психологилле ӑн», – ҫырать тӗпчевҫӗ хӑйӗн «Иван Мучи пултарулӑхӗ тата чӑваш литературинчи кулӑшӑн илемлӗ хӑйне евӗрлӗхӗ» /Шупашкар, 2001/ ӗҫӗнче. Кунта автор эстетика ӑнне наци ӑнӗн пӗр пӗчӗк пайӗн курса хаклани пӗлтерӗшлӗ. Сӑмахлӑх тӗпчевҫин эстетикӑна кӑна мар, наци ӑнӗн ытти турачӗсене те, тӗп вуллине те курма пӗлмелле. Ҫак туртӑм, ман шухӑшӑмпала, XX ӗмӗр вӗҫӗнчи чӑваш сӑмахлӑх пӗлӗвӗн чи пысӑк ҫӗнӗлӗхӗсенчен пӗри. Пирӗн литературоведсем ӑн, наци культурин вӑхӑчӗпе талккӑшӗ, чӑваш цивилизацийӗ пирки сӑмахлама тата шухӑшлама пуҫларӗҫ. Ку тӗлӗшрен Георгий Иосифович чи хастарри пулчӗ.

Тӗпчевҫӗ чӑвашсем Сӑмах патне туртӑннин сӑлтавӗсене шырарӗ. «Чӑвашсен сӑмахлӑ культури вара икӗ йӳппе кайнӑ, – асӑрхать ӑсчах, – пӗрисем, калассине пӗлтересех тенипе, нумай сӑмахлӑх енне ҫул тытнӑ /Игнатий Иванов, И.Юркин, Илпек Микулайӗ, А.Емельянов, Л.Таллеров/, теприсемшӗн хӑш-пӗр кӑмӑла каламасӑр хӑварасси те юравлӑ пулнӑ /И.Яковлев шкулӗнчи Букварь, И.Мучи, М.Федоров, И.Тӑхти, Хв.Уяр, Хв.Агивер/». Автор шучӗпе, каласа пӗтермен шухӑш итлекене /вулакана/ пин вӑрттӑнпа илӗртнӗ. Ҫакнашкал ытарлӑ шухӑшӗ ай текста /подтекст/ кайнӑ. Эппин, кулӑш вӑл философи категорийӗ кӑна мар, вӑлтмалли мел те, стиль, шухӑш инструменчӗ те.

Г.Федоров чӑваш сӑмахӗн нумай функцилӗхне те, унӑн кулӑш мехелӗпе тӗрлӗ енлӗ ҫыхӑнӑвӗсене те тӗплӗн тишкерчӗ. Вӑл юптарупа вӑлтӑва тата шахвӑртӑва чӑвашсен сӑнарлӑ шухӑшлавӗнчи философийӗн тӗп калӑпӗсенчен пӗри тесе шухӑшлать. «Пурнӑҫ малашӗ ҫав калӑпра – Сӑмах /культура символӗ/ пулнӑ-тӑр», – пӗтӗмлетет тӗпчевҫӗ-ҫыравҫӑ.

Чӑваша унӑн историйӗпе, шухӑшлавӗпе, философилле ӑславӗпе хакласа пӑхни, унӑн чун-чӗре, кӑмӑл-сипет ӗнерӗвӗпе юхӑмне тӑнлани Г.Федорова ҫӗнӗ меслетлӗх патне илсе ҫитерчӗ. Вӑл халӗ культурфилософ пек, Сӑмаха халӑхӑмӑрӑн ӑнӗ витӗр куракан пек пулса ҫитрӗ. Ҫак сулӑм чӑваш литератури пӗлӗвне ҫӗнӗ шая ҫӗкленме пулӑшрӗ. Акӑ хайхи эпӗ маларах каланӑ шухӑш – иртнӗ Вунӑ ҫуллӑх Г.Федоровӑн пулчӗ тени – кӗретленчӗ те.

Вӑл тарӑн ӑслӑ тӗпчевҫӗ кӑна мар, шанчӑклӑ тата ырӑ чунлӑ юлташ та. Ун калаҫӑвӗнче чеелӗх мар, ӑс малта пырать. Ҫавӑншӑн юратаҫҫӗ ӑна ӗҫтешӗсемпе вӗренекенӗсем.

Г.Федоров профессорӑн аспиранчӗсем йышлӑ. Вӗсенчен хӑшӗ-пӗри кандидат диссертацийӗсене хӳтӗлеме те ӗлкӗрчӗ. Чӑваш патшалӑх университетӗнчи стилистикӑпа библиотековедени кафедрин пуҫлӑхӗ ырми-канми тӑрӑшать, ҫамрӑксене пурнӑҫӑн анлӑ ҫулӗ ҫине кӑларас тӗллевпе чӗрине ҫунтарать.

Тавах сана, тӑванӑмӑр. Ӗҫӳсем ӑнса пыччӑр!

**Виталий РОДИОНОВ,**
**И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн чӑваш филологийӗпе культура факультечӗн деканӗ.**